# Çĕнтерӳ ялавĕ

Муркаш район хаçачĕ

1944 çулхи майăн 5-мĕшĕнчепе тухать

61 (7486) № ✻ Шăмат кун, 2007 çулхи июлĕн (утă) 28-мĕшĕ ✻ Хакĕ ирĕклĕ


**Вырма – 2007**

## Çĕнĕ вырма çĕнĕ тĕллевсем палăртать

Çакăн пек пĕтĕмлетӳ турăм эпĕ район администрацийĕн ял хуçалăх пайĕн пуçлăхĕн çумĕпе - районти тĕп агрономпа Александр Ильич Павловпа тата Чăваш Республикин Патшалăх техника надзор инспекцийĕн Муркаш районĕнчи аслă инспекторĕпе Сергей Александрович Николаевпа "Оринино", "Передовик", "Сеятель", "Чемеево", Суворов ячĕпе хисепленекен ял хуçалăх производство кооперативĕсене çитсе вĕсенче вырмана епле хатĕрленнине, ытти кĕрхи ĕçсем çине мĕнле пăхнине, рынок хутшăнăвĕ çĕр ĕçĕ çине мĕнле витĕм кӳнине пăхнă-хакланă май.

– Паян уяр кунăн кашни минучĕ-сехечĕпе туллин усă курса тырă вырмалла. Кĕрхисем пиçсе çитнĕ ĕнтĕ. Вĕсем тулли пучахсемпе пуç усса çĕр ĕçченне хăйсем патне чĕнеççĕ. Хăш-пĕр пусăри тырра аланипех кĕлете хурма пулать, мĕншĕн тесен вĕсем пиçсе çитнипе пĕрлех типĕ те. Çакă вăл хакланнă тырăн хăйхаклăхне чакармалли пĕр çул. Ĕçре кунашкал кашни меллепе туллин усă курсан хуçалăхсен экономики те тĕреклеленĕ, аталану та вăй илĕ, пурнăç условийĕсем те юсанĕç, – терĕ "Сеятель" хуçалăхри кĕрхи тулă уйĕнче А. Павлов. Улăмра кăшт нӳрĕк пуррине пăхса-ши хуçалăхăн "хир карапĕсем" уя тухман-ха. Шăмат кун тухма шут пурри пирки пĕлтерчĕç паркри ĕçченсем...



**Н. Павлов С. Николаева умри ĕçсемпе паллаштарать.**

"Оринино" хуçалăхра вырмана тухиччен тырă вырмалли комбайнсене техника тĕрĕслевĕ витĕр кăларассипе эпир çитиччен пĕр кун çеç мар хыпаланнă курăнать. Ĕç хăрушсăрлăхĕ çине пысăк тимлĕх уйăрнăран комбайнсем çинче ăнсăртран тухма пултаракан "хĕрлĕ автанпа" кĕрешме пирвайхи хатĕрсем пурте майлах пур. Куншăн савăнмалла кăна. Çак кун (июлĕн 25-мĕшĕ) хуçалăхăн вырмана хутшăнмалли 5 "хир карапĕнчен" 2-шĕ çеç техника тĕрĕслевĕ витĕр тухса ĕçлеме ирĕк илчĕç. Кăнтăр апачĕ хыççăн хире тухса вĕсем 142 гектар çинчи кĕрхи тулăна 10 гектар вырса хучĕç те. Икĕ кун маларах Ильич ячĕпе хисепленекен хуçалăхра та вырмана хутшăнмалли 5 комбайнран иккĕшĕ çеç техосмотр тăрса ĕçе тухма ирĕк илсе районта пуринчен малтан вырмана кӳлĕнчĕç. Мĕн каламалла-ха ирĕк илесси пирки? Ĕнерхи кун тĕлне район уй-хирĕсенче техосмотр тăрса ĕçлеме ирĕк илнĕ "хир карапĕсем" пиллĕк ĕçлетчĕç. Районта кăçалхи вырмана 98 комбайн хутшăнмалла пулсан, ĕнерхи кун тĕлне 7-шĕ çеç техосмотр тăрса ĕçе тухма официаллă ирĕк илнĕ. Çакă кашни ертӳçĕне, инженера, механизатора шутлаттарма тивĕç. Кăткăс техникăпа ĕçлесси вăл вăйă вылясси мар-çке.

Суворов ячĕпе хисепленекен ял хуçалăх производство кооперативĕнче те вырмана иртнĕ юн кун тухрĕç. Пĕтĕм хуçалăх пĕрремĕш кунранах çак ответлă ĕçе пĕр çын пек кӳлĕнчĕ. Хамăр район çынни "Чувашагролизинг" усă акционерлă обществăн лизинг обьекчĕсене тĕрĕслекен пай пуçлăхĕ Николай Витальевич Павлов отпуск илсех В. Бархаткин фермер лизингпа туяннă Дон–1500Б комбайнпа хуçалăхăн "московская-39" кĕрхи тулă пуссине тухнă.

– Кунти лаптăк 14 гектар йышăнать терĕç те ăна паян вырса пĕтеретĕпех ĕнтĕ. Тырри выртнă пулсан та типĕ. Ăна пуçтарса илессине хуçалăх вăхăтра тытăнни çухатусен пĕр пайĕнчен хăтăлма пулăшать. Ку лаптăкра тухăç 35 центнер пулатех тесе шутлатăп, – терĕ пирĕнпе калаçма комбайн çинчен аннă Н. Павлов тĕп ĕç малта пулнине палăртса. Суворов яч. хис. хуçалăхăн кăçалхи вырмара пĕтĕмпе 840 гектар (вĕсенчен 250-шĕ кĕрхи культурăсем) çинче тырă-пулă пуçтарса кĕртмелле. Хуçалăхăн йĕтемĕ çине кĕтĕмĕр те кунта килнĕ çĕнĕ тырăна алакан ушкăн хĕрӳ ĕçрине куртăмăр. Хуçалăх ертӳçи В. Андреев та, хуçалăхăн тĕп агрономĕ Г. Албутова та кунтах. "Çынсем пурте пĕр шухăш-ĕмĕтлĕ пулни, хушнă ĕçрен пăрăнманни малтуртăмлă ĕçлеме хавхалантарать, ыранхи пирки шухăшлаттарать. Акă вырма çитрĕ те кĕр аки умра тăни пирки те самантлăха манма юрамасть. Вăхăтра ирттернĕ кĕр аки пысăк тухăç никĕсĕ пулнине районта ыттисемпе пĕрле эпир те ăнланса илтĕмĕр. Кăçал ăна 500-600 гектар çинче акса хăварма ĕмĕтсем пур. Çĕрĕсем те çу каçа пăхса тăнăран хатĕрпе пĕрех. Ĕлкĕрсе юласчĕ çеç, – тет ытти чух сăмах нумай ваклама юратман В. Андреев. Çирĕп алăри "хир карапĕ" вара çаврăм хыççăн çаврăм тăвать. Пĕлекен аллинче выртнă тырăран та комбайн хыççăн çапса



**А. И. Павлов тырăсем пиçнине тата хăш уйра мĕнле ĕçсем пынине ответлăха туйсах сăнарĕ-тишкерчĕ.**

тĕшĕлемен пучах юлмасть.

– Пирĕн "Чемеево" хуçалăхра вырма лаптăкĕ 440 гектар йышăнать. Ăна вырса илессипе "Енисей-1200" тата "Дон-1500" комбайнсем ĕçлĕç. Вĕсене хатĕрлессипе юлашки ĕçсем пыраççĕ. Йĕтемсем тырă йышăнма хатĕрпе пĕрех, – пĕлтерчĕ 27 гектар йышăнакан третикалий хирĕнче хуçалăх ертӳçи Н. Петров комбайнсене ĕçе хатĕрлесе пĕтерессипе юлашки ĕçсем пынине палăртса.

Çав кун пиçсе çитнĕ ырашпа кĕрхи тулăсен пуссисем çинче вырма вăхăчĕ çитнине систерсе ăрша вылятчĕ. Паян вара иртенпех çумăр...

**Анатолий БЕЛОВ.**
**Автор сăн ӳкерчĕкĕсем.**

---

**Район администрацийĕн пуçлăхĕн йышăнăвĕ**

**2007 çулхи июлĕн 23-мĕшĕ** **264 №**

## 2007 çулхи вырмари ял хуçалăх предприятийĕсенчи механизаторсем хушшинчи конкурс çинчен

Механизаторсене анлăн явăçтарма тата вырма ĕçĕсене агротехникăпа палăртнă кĕске тапхăрта пахалăхлă ирттерме

– ял хуçалăх предприятийĕсенчи механизаторсем хушшинче августăн 1-мĕшĕнчен пуçласа сентябрĕн 15-мĕшĕччен конкурс ирттерес, итогĕсене кашни эрнере пĕтĕмлетес.

– вырмара механизаторсем хушшинче агротехника требованийĕсене, хăрушсăрлăх техникине, ĕç дисциплинине пăхăнса чи пысăк кăтартусем тунисем çĕнтернĕ тесе шутлас.

– конкурсра призлă вырăнсем йышăннисем валли çакăн пек премисем çирĕплетес, тырă çапса тĕшĕлемелли эрнери нормăсене тултарнисене свидетельствăсем парас:

Дон-1500, Енисей-954 комбайнсен йышĕнче – 280 тонна:
1 вырăн – 300 тенкĕ (свидетельство),
2 вырăн – 200 тенкĕ (свидетельство),
3 вырăн 100 тенкĕ (свидетельство).

Енисей-1200 комбайнсен йышĕнче – 224 тонна:
1 вырăн – 300 тенкĕ (свидетельство),
2 вырăн – 200 тенкĕ (свидетельство),
3 вырăн – 100 тенкĕ (свидетельство).

Нива-СК-5 комбайнсен йышĕнче – 182 тонна:
1 вырăн – 300 тенкĕ (свидетельство),
2 вырăн – 200 тенкĕ (свидетельство),
3 вырăн – 100 тенкĕ (свидетельство).

2007 çулхи вырма итогĕсемпе мала тухнă экипажсем валли 3 премии çирĕплетес:

Пуринчен нумай тырă çапса тĕшĕлесе мала тухнă комбайнерсен экипажĕсем хушшинче 3 премии çирĕплетес:
1 вырăн – 1200 тенкĕ, 1 степеньлĕ диплом, чемпион хăйăвĕ.
2 вырăн – 1000 тенкĕ, 2 степеньлĕ диплом.
3 вырăн – 800 тенкĕ, 3 степеньлĕ диплом.

Вырмара тырă турттарса мала тухнă водительсем хушшинче:
1 вырăн – 600 тенкĕ, 1 степеньлĕ диплом, чемпион хăйăвĕ,
2 вырăн – 500 тенкĕ, 2 степеньлĕ диплом,
3 вырăн – 400 тенкĕ, 1 степеньлĕ диплом.

Тырă-пулă сăвăртса мала тухнă звеносем хушшинче:
1 вырăн – 1500 тенкĕ (2007 çулхи ноябрĕн 1-мĕшĕ тĕлне мĕн пур кирлĕ вăрлăхăн 100 процентне кондицие çитермелле), 1 степеньлĕ диплом,
2 вырăн – 1200 тенкĕ (çӳлерех палăртнă срока мĕн пур кирлĕ вăрлăхăн 95 процентне кондицие çитермелле), 2 степеньлĕ диплом.
3 вырăн – 1000 тенкĕ (çӳлерех палăртнă срока мĕн пур кирлĕ вăрлăхăн 90 процентне кондицие çитермелле), 3 степеньлĕ диплом.

Конкурс итогĕсене кашни эрнере массăллă информаци хатĕрĕсенче пичетлемелле.

Конкурс итогĕсене пĕтĕмлетме комисси йĕркелес, ăна район администрацийĕн пуçлăхĕн пĕрремĕш çумĕ А.Н. Иванов ертсе пырать.

Ф.Ф. Григорьева, агропромышленность комплексĕнче ĕçлекенсен профсоюз райкомĕн председателĕ, комисси председателĕн çумĕ;

П.П. Замятина, районти вăрлăх инспекцийĕн пуçлăхĕ, комисси членĕ;

С.А. Николаев, ЧР Ял хуçалхăх министерствин Муркаш районĕ тăрăх патшалăх техника надзорĕн инспекцийĕн пуçлăхĕ;

В.Л. Шапошников, районти "Çĕнтерӳ ялавĕ" хаçачĕн тĕп редакторĕн çумĕ.

**Район администрацийĕн пуçлăхĕ**
**Ю.А. ИВАНОВ.**

---

**Политика**

## Кандидатсем паллă. Вĕсен шутĕнче — пирĕн ентеш

"Пĕрлĕхлĕ Раççей" (Единая Россия) партин Чăваш Енри уйрăмĕ РФ Патшалăх Думин суйлавне хутшăнма пултаракан парти членĕсен хушамачĕсене официаллă пĕлтернĕ.

Партин Патшалăх Думин депутачĕсен кандидачĕсен списокне йĕркелеме май паракан кадрсен резервне Чăваш Енрен 11 çын кĕнĕ. Кĕтнĕ пекех, списокăн малтанхи йĕркисенче – Николай Федоров Президент, Патшалăх Канашĕн председателĕ Михаил Михайловский, Патшалăх Думин депутачĕсем Константин Косачевпа Павел Семенов.

Суйлав умĕнхи списокра çавăн пекех Раççейĕн икĕ Геройĕ – пирĕн ентеш Николай Бударин космонавт-летчик тата Çурçĕр Кавказ çар округĕнче хĕç-пăшаллă ушкăнсене тĕп тума хутшăннă Евгений Борисов пур. Вĕсем хыççăн Президентăн перинаталь центрĕн тĕп врачĕ Алла Самойлова, Патăрьел район депутачĕсен Пухăвĕн председателĕ, "Малалла" ял хуçалăх предприятийĕн ертӳçи Михаил Петров, педагогика ĕçĕн ветеранĕ, Патшалăх Канашĕн иккĕмĕш тата виççĕмĕш суйлаври депутачĕ Елена Сергеева пенсионерка.

Кадрсен резервĕн списокне "ПолитЗавод" конкурсăн иртнĕ çулхи икĕ çĕнтерӳçи кĕнĕ: 21 çулти усламçă, Шупашкар хула Пухăвĕн депутачĕ Ильяс Калмыков тата "Пĕрлĕхлĕ Раççей" партин Çамрăк Гвардин Шупашкар районĕнчи уйрăмĕн ертӳçи 28 çулти Алексей Юрьев.

**"Радиохум – хаçат страницинче: халăх тата влаç: тĕллевсем пĕр пек, ĕçсем те пĕрле**

## Кашни ыйту пĕлтерĕшлĕ

Кулленхи ĕçре вăл е ку ыйтупа район центрне кайма та вăхăт çукрах. Район администрацийĕн ĕçченĕсем вырăна тухни унти лару-тăрăва тĕрĕс хак пама пулăшать. Унтан та ытларах, ку тăрăхра пурăнакансен шухăш-кăмăлне пĕлсе, май килнĕ таран вĕсен ыйтăвĕсене вĕсене майлах татса пама май парать. Çулталăк пуçламăшĕнче ял тăрăхĕсен кунне ирттернин тĕп сăлтавĕсенчен пĕри шăпах çакă пулса тăчĕ те. Халăх хускатнă ыйтусем те пĕрле татса памаллисемех. Хăшĕсене вырăнтах çине тăрса вĕçлеме пулать, теприсене татса панă чух районтан пулăшу кирлĕ пулать. Кирлех пулсан – республика шайне те тухма тивет.

Мĕн улшăнчĕ-ха унтанпа? Çитсе килер-ха паян хăшпĕр ял тăрăхĕсене.

Акă, Ярапайкасси ял тăрăхĕн кунĕнче кунта пурăнакансем Шупашкара кайма автобус рейсĕсем сахалтараххи пирки ыйту хускатрĕç. Вăл вăхăтра "Чувашавтотрансăн" пĕр автобусĕ кунне 2 рейс тунă. А .И. Кудряшов уйрăм предпринимателĕн автобусĕ – 6 рейс. Паян вара, ял тăрăхĕнчен пĕлтернĕ тăрăх, Ярапайкассине "Чувашавтотрансăн" малтан çӳрекен автобусĕсĕр пуçне тепĕр 126-мĕш номерлĕ автобусĕ çӳрет. Вăл кунне тепĕр 5 рейс тăвать. Февраль уйăхĕнчен пуçласа А. И. Кудряшов предприниматель вара хăйĕн автобусĕпе çӳрекен студентсемпе вĕренекенсем валли билет хакне 25 процент йӳнетнĕ.

Хорнуй ял тăрăхĕн кунĕнче вара Хорнуйĕнче Коçмуй урамĕнче шыв ыйтăвĕ çивĕч тăни палăрчĕ. Шыв ыйтăвĕ кунта насус çĕмĕрĕлсе кайнипе çыхăннă пулнă.

– Ленин ячĕллĕ хуçалăх пулăшнипе насус туянса, халăхпа вырнаçтартăмăр. Паянхи кун асăннă урамра шыв проблеми çук, – пĕлтерет ял тăрăхĕн пуçлăхĕ В. А. Любимова.

Чуманкасси ял тăрăхĕнче вăл вăхăтри тĕлпулусенче. хускатнă ыйтусем те пурнăçа кĕрсе пыраççĕ.. Чапаев ячĕпе хисепленекен хуçалăхри Шарпаш фермине пырса кĕме май çукки пирки пăшăрханса пĕлтерни те калаçнипех юлмарĕ. Асăннă хуçалăх ертӳçи В. П. Морозов çине тăрсах ку ыйтăва татса пачĕ.

Исетерккĕ клубĕпе шкулĕн çивиттийĕ юхас проблема та кăçал кунта пулмасть. Ял тăрăхĕн пуçлăхĕ Л. Г. Ковалева иртнĕ эрне кун çапла пĕлтерчĕ:

**(Вĕçĕ 5-мĕш стр.).**

**Юбилей**

## *Саламлатпăр*

Ахмане ялĕнчи ĕçчен те тӳрĕ кăмăллă, сăпайлă та юратнă çыннăмăр **Иван Валерьянович ШАРИКОВ** ыран 50 çул тултарать. Ăна юбилей ячĕпе чĕререн саламланă май эпир сывлăх, хавас кăмăл, иксĕлми телей сунатпăр. Ĕмĕтленнĕ ĕмĕчĕсем çитсе пыччăр, пурнăçу сурпан пек вăрăм пултар. Пичӳ çинчен ăшă кулă ан таталтăр.

**Хĕрӳллĕ салампа ашшĕпе амăшĕ, аппăшĕ, йăмăкĕсемпе вĕсен çемйисем, хĕрĕсем, кĕрӳшĕпе мăнукĕ, хăтипе тăхлачи, çывăх тăванĕсем.**

---

Пирĕн хаклăран та хаклă çыннăмăра, пархатарлă аттепе хуньстарике, ăшă кăмăллă асаттепе кукаçие – Çĕньял Шурча ялĕнче пурăнакан тата тăван хуçалăхра 35 çул хушши тĕп бухгалтер пулса ĕçленĕ **Владимир Федорович ФЕДОРОВА** 80 çул тултарнă ятпа ăшшăн саламлатпăр. Иксĕлми телей, чун хăвачĕ, хĕвеллĕ кун-çул тата нумай-нумай çул пурăнма çирĕп сывлăх сунатпăр.

**Саламлаканĕсем: ывăлĕсемпе кинĕсем, хĕрĕсемпе кĕрӳшĕсем, 15 мăнукĕ, 4 прамăнукĕ, тăванĕсем.**